Пире страхлакан компанисен юбилейĕсем

# «Росгосстрах»: страховани рынокĕнче 85 çул

***Октябрĕн 6-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн страховани рынокĕнче малта пыракан страхлакан компани – Росгосстрах – хăйĕн 85 çулне паллă тăвать. Çак компанин витĕмĕ пирĕн районта та пĕчĕк мар. Çĕршыври страхлакан пысăк компанин пĕр пайĕ пулнă май Муркашсем те çак аталану çулĕн кашни çавăрмакнех кĕрсе тухса пуян опыт пухнă май паян халăхпа ĕçлес çĕрте пысăк ӳсĕмсем тăваççĕ. Иртнине тĕплĕ тишкерсе малашлăха шанчăклă пăхса халăха йывăр вăхăтра пулăшас тĕллевпе страхлакан пай пуçлăхĕ Валерий ВЯЗОВ пĕрле ĕçлекенсемпе çĕнĕлĕх хыççăн çĕнĕлĕх шырать. Район хаçачĕн сотрудникĕ Анатолий БЕЛОВ уяв умĕн унпа тĕл пулса хăш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнă.***

**– Валерий Иванович, мĕнле кăмăлсен тыткăнĕнче кĕтсе илетĕр-ха эсир хăвăр уява? Страхлакан пай кăтартăвĕсемпе кăмăллă-и?**

– Çак кунсенче эпир те, хамăрăн ытти коллегăсем пекех, ĕçĕмĕрсене пĕтĕмлететпĕр, ку таранччenхи аталану çулне хак парса малашнехи плансемпе тĕллевсем çинчен шутлатпăр. Пĕрлехи тăрăшулăхпа коллектив лайăх кăтартусен çулĕ çине тухрĕ. Кăçалхи тăхăр уйăхра пирĕн патăмăра килнĕ тӳлевсен калăпăшĕн ӳсĕм çитĕнĕвĕ 123 процент пулчĕ. Пĕлтĕр пирĕн страхлакан пай страхованин пĕтĕм тĕсĕсемпе, автограждансла яваплăха обязательнăй майпа страхлассипе (ОСАГО) пĕрле шутласан, халăха 760 миллион тенкĕлĕх страховани услугисем пачĕ пулсан, кăçал – 775 миллион тенкĕлĕх пулчĕ те. ОСАГОпа страховани тӳлевĕсен сумми 2005 çултa 1278 пин тенкĕ пулнă пулсан, кăçалхи 9 уйăхра – 1668 пин тенкĕ. Паянхи куна страхлакан пай 12800 килĕшӳ туса клиентсен ыйтăвĕсене тивĕçтерет. Çапла вара эпир куçман пурлăха, килти пурлăха, граждансен автотраспортне тата выльăх-чĕрлĕхне страхлассипе унччeнхипе пĕр шайра е маларах та ĕçлесе пыратпăр. Росгосстрах компани хăйĕн ятне ямасть, конкуренци вăйланнине пăхмасăрах вăл малашне те халăхпа çывăх пулĕ.

**– Паян экономикăн пур отраслĕсенче те конкуренци палăрать. Акă, пирĕн районта та темиçе страхлакан компани ĕçлет. Сирĕн компани ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăрать? Клиентсене мĕнпе илĕртет тата тытса тăрать вăл?**

– Страховани рынокĕнче нумай çул ĕçлени кунта малти вырăнта. Паян пире 85 çул. Эпир Раççейри чи сумлă страхлакан организацисенчен пĕри. Иккĕмĕшĕ – пысăк профессиллĕх. Пирĕн специалистсем страховани ĕçĕнче пуян опыт пухнă çынсем. Вĕсем ял хуçалăхĕнче те, пĕчĕк бизнесра та, уйрăм çын харпăрлăхĕнче те, çын пурнăçĕпе сывлăх хăрушлăхĕшĕн те хăйсен ĕçне çӳллĕ шайра тăваççĕ. Анчах çакă лăпланмалли сăлтав мар. Нумай çуллă историе пăхмасăрах Росгосстрах пĕр вырăнта тăмасть, вăл тăтăшах шыравра. Çак çулпа пырса эпир кулленех страховани ĕçĕн малта пыракан стандарчĕсене пурнăçа кĕртетпĕр. "Росгосстрах – кил-çурт", "Росгосстрах – Бизнес" çĕнĕ программăсем кулленхи пурнăçа çирĕппĕн кĕчĕç те пирĕн страхователсемшĕн чи кирлĕ енсем пулса тăчĕç. Кунтах манăн хамăрпа нумай çул çыхăну тытакан партнерсене тав сăмахĕ калас килет. Чылайăшĕ хăйсен страхлакан пурлăхне совет çулĕсенчех Госстраха шаннăскерсем, çак çултан паян та пăрăнмаççĕ. Вĕсен шутне паян манăн районти Перекет банкне, "Моргаушавтотехсервис" тата "Моргаушагропромхими" предприятисене, хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацине, "Муркаш район тĕп больници" сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учреждениne, "Ударник", "Свобода", "Восток", "Герой", "Оринино" ял хуçалăх предприятийĕсене, Муркашри "Никита" автостанцие кĕртес килет. Çак предприяти-организацисен ертӳçисем пирĕнпе тачă çыхăну тытнинче вĕсем паянхи кунпа çеç пурăнманни курăнать. Ку вăл – район пуласлăхĕ.

**– Сирĕн ĕç-хĕлĕн тĕп утăмĕсенчен пĕри "автогражданка" пулса тăчĕ. Росгосстрахăн Муркашри страхлакан пайĕ ку енпе мĕнле ӳсĕмсем турĕ?**

– 2005 çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе районти 1898 автомашина хуçи автограждан-ка яваплăхне страхласа хӳтĕлессине пире шанчĕ. Кăçалхи 9 уйăхра ку енпе пирĕн 1939 страховани килĕшĕвĕ ĕçлет те ĕнтĕ. Автоçулсен иртсе çӳремелли енĕсем ансăррине кура эпир хамăр автолюбительсене çул-йĕр çинчи инкексенче инкек виçине май пур таран пĕчĕклетсе пама тăрăшатпăр.

**– Валерий Иванович, страховани ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсем пирки мĕн калайратăр? Паянхи куна малашлăхлă тесе мĕне палăртатăр?**

– Росгосстрах – Раççейри чи аслă страховани компанийĕсенчен пĕри. Ӳсĕме пăхмасăрах эпир пĕр вырăнта тăмастпăр, хамăр ĕçе страхованин çĕнĕ тĕсĕсене кĕртетпĕр, çĕнĕ программăсене алла илетпĕр. Акă, рынок улшăнăвĕсене тата страхователсен ыйтăвĕсене шута илсе эпир нумаях пулмасть çынсен пурнăçне нумай вăхăтлăха страхлас ĕçе пуçартăмăр. Пурнăçа страхлани вăл укçа-тенкĕ пухасси мар, чи малтанах çемьене тăрантаракана çухатсан, çемьен укçа-тенкĕ çухатăвне тăруках япăхтарса ярас марри. Пӳрт-çуртпа килти пурлăха страхланипе пĕрлех паян автострахования, уйрăмах çĕнĕ автомашинăсене страхласси, малти вырăна тухрĕ. Çакна шута илсе Росгосстрах çĕнĕ "Эталон АВТОКАСКО" проекта реализацилес çул çине тăчĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ: автовладелец пирĕн офиса автомашинăна страхлама килет пулсан, страхланă ĕçшĕн унăн (аварисĕр ĕçленĕ пулсан) 20-25 процент таран сахалрах тӳлемелле пулать. Перекет мар-и çакă!

**– Çыннăн страховани суйлавĕн приоритечĕ анлăланнине мĕнпе ăнлантаратăр?**

– Кăна рынок ыйтăвĕпе сарăлнă пулăм теес килет. Халăхăн пысăк пайĕ ытларах ĕçлесе илме пуçларĕ, банксен кредит программисем ăнăçлă пурнăçа кĕреççĕ, çынсем страховани пĕлтерĕшне пĕлесси ӳсрĕ. Çапла вара граждансем автомашинăсăр пуçне хваттерсене, пӳрт-çуртсене, дачăсене страхлама пуçларĕç. Ман шутпа çакă çынсем пуянрах пулнине мар, пурнăçра харпăрлăх хуçи тарăнрах тымар янине пĕлтерет. Нумаях пулмасть хăй ĕлесе илнĕ укçа-тенкĕпе туяннă хваттерте, уйрăм пӳртре пурăнакан çын хăйĕн пурлăхĕ çине урăхларах пăхма пуçларĕ. Вăл хăйĕн хваттерĕн чăн хакне пĕлнĕрен ăна тĕрлĕ хăрушлăхран сыхласа хăварма тăрăшать те.

**– Сирĕн страхлакан пай ял хуçалăхĕнче çĕр ĕçченĕсем пĕтĕм яваплăха хăйсем çине илсе ĕçленипе мĕнле çыхăнура пырать?**

– Çăмăл мар ыйту. Сĕтел çинче çăкăр пултăр тесен пурин те пĕрле тимлемелле. Агропромышленность производствинче çĕр ĕçченĕсем пĕтĕм яваплăха хăйсем çине илсе ĕçленине страхлас программа шайĕнче эпир ял хуçалăх предприятийĕсене страхованин çакăн пек тĕсĕсене сĕнетпĕр: тыр-пул тухăçне, выльăх-чĕрлĕхе, ял хуçалăх техникипе оборудованине, производство çурчĕсене, чĕртаварпа продукцие страхлассi. Патшалăх пулакан çухатăвăн пĕтĕм пайне майлах саплаштарать: федераллă центр 50 процент, республика 25 процента яхăн. Эпир агропрмышленность комплексне çăмăллатнă кредитсем паракан банксемпе активлă çыхăнса ĕçлетпĕр. Вĕсем: Россельхозбанк, РФ Перекет банкĕ.

**– Эсир агентсем урлă ĕçлетĕр. Хаçат вулакансене хăвăр коллективпа паллаштармăр-и? Агентсем вĕрентсе хатĕрлессипе компани политики еплерех?**

– Паянхи кун пирĕн патăмăрта 54 агент ĕçлет. Пирĕн страхлакан агентсем страхованин кирек хăш отраслĕпе те профессионалсем. Кунта уйрăм çын харпăрлăхĕ те, ял хуçалăхĕ те, пĕчĕк бизнес та, пурнăçпа сывлăх та кĕреççĕ. Нумай çынсемшĕн пирĕн агентсем кăмăллă та шанчăклă канашçăсем. Вĕсенчен паян уйрăмах çаксене палăртас килет: В.П. Илларионов, А.П. Антонов, Г.В. Яковлева, Э.А. Антонова, Ю.С. Пикушкина, В.К. Сальникова. Вĕсем тăтăшах халăх хушшинче пулни – пирĕн ĕç ăнăçăвĕн никĕсĕ.

Росгосстрах компани специалистсем хатĕрлесси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Вĕрентӳ системи ансатлăхран кăткăслăх патне йĕркеленет, теорирен практика патне. Пирĕн тĕллев – пирĕн системăна килекен кашни агента чылай вăхăтлăха интереслĕ ĕçпе тивĕçтересси.

**– Çывăх пуласлăхри чи пирвайхи тĕллевсем еплерех?**

– Эпир пĕтĕм тăрăшулăхпа хамăр пата килнĕ клиент кăмăллă юлассишĕн тимлетпĕр. Страхлани канлĕ пурнăç никĕсĕ пулнине çынсене ăнлантарасси – çывăх малашлăхри тĕллев.

**– Мĕн сĕннĕ пулăттăр эсир хăвăр патăрта страхланакансене?**

– Чи малтанах пире шанса та ĕненсе пирĕнпе çултан-çул çыхăну тытакансене, пирĕн патăмăрта пурнăçа, сывлăха, пурлăха, автотранспорта страхлакансене тав тăватăп, уявпа саламлатăп. Эпир Сирĕн умри хамăр обязательствăсем пирки манмастпăр. Пурне те сывлăх, телей ăнăçу пултăр. Эпир Сирĕнпе пулма хавас.

Вулакан пултарулăхĕ

## ТĂВАНЛĂХ ÇĂЛ КУÇĔ

**Кĕввипе сăвви Олег Залогинăн**

Хур кайăксем çӳл тӳпере вĕçеççĕ,
Кăриклетсе, пĕрле кайма хистеççĕ.
Е халĕ те вĕсем пĕлмеççĕ темшĕн,
Юлас пулать çынсен кĕтсе илмешкĕн?
Тăван кĕтес – тунсăхлакан пур чух,
Вăл кĕтекенсĕр ют, вăл унсăр çук.
Тавах, тăван кил-йыш, атте-анне,
Упранăшăн тăванлăх çăл куçне.
Юр айĕнче сасартăк çухалаççĕ,
Киленнĕ çеçкесем ялан пулмаççĕ.
Кăра çилсем хăш чух хуçаланаççĕ,
Пур çул, сукмаксене шăлса лартаççĕ.
Пĕр туйăм ăшăтать ун чух ăша,
Вăл шурă юр пекех, ялан таса.
Ăна шăнтса лартаймĕç сивĕсем,
Çаплах тапса тăраççĕ çăл куççем.
Шăнкăртатаç çурхи юхан шывсем,
Пуçа çухаттараç каллех каççем.
Янраç асамлă шăпчăк юррисем,
Юлаççĕ улшăнмасăр туйăмсем.
Тавах хисепе тивĕçлĕ çынна,
Кил ăшшине тытса тăракана,
Пирĕшти пек чăваш хĕрарăмне,
Пил паракан чăвашăн амăшне.

Республикăра

## Чăваш ялĕсене – 25 миллиард тенкĕ

Çитес икĕ çулта Чăваш ялĕсене хушма укçа 25 миллиард тенкĕ хывĕç. Çакăн пирки республика Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсен тата федераци ведомствисен хăш-пĕр территори органĕсен ертӳçисен йăлана кĕнĕ канашлăвĕнче пĕлтернĕ.

Çак укçа-тенке ял хуçалăх производствине тата ялти общество инфраструктурине аталантарма уйăраççĕ. Чăваш Ен Президенчĕпе иртнĕ эрнере Чăваш Республикине килсе кайнă Раççей ял хуçалăх министрĕ Алексей Гордеев çакăн пек килĕшсе татăлнă. "Çакăн пек кĕске хушăра çакнашкал ресурссене эпир ялсенче çитес вăхăтрах салатаймăпăр. Ку ялта малалла туртăнмалли çирĕп никĕс хывмалли меслет", – тенĕ Николай Федоров. Унсăр пуçне, çитес çул пуçламăшĕнче пулă хуçалăхне модернизацилеме тата аталантарма пысăк укçа уйăраççĕ. Республика пуçлăхĕ ял хуçалăх министрне Михаил Игнатьева тивĕçлĕ сĕнӳсем хатĕрлеме хушнă.

## Венгрсем укçа хывма хатĕр

Шăмат кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Венгри Республикин ОТР Банкĕн президенчĕ Шандор Чани господин ертсе пыракан делегацие йышăннă.

Венгрири çак пысăк банк конкретлă проектсене пурнăçлама инвестици хывма хатĕр. Тĕл пулу вăхăтĕнче Чăваш Ен малашне ОТР Банкпа çыхăну тытса ĕçлемелли çулйĕре палăртнă.

Маларах Венгри делегацийĕ, унăн йышĕнче – Венгри Республикин Ял хуçалăхĕпе ял хуçалăх аталанăвĕн министерствин ĕçченĕнсем, ĕçлĕ ушкăнсене кĕрекенсем Патăрьел районĕнче сысна ĕрчетмелли комплекс тума лаптăксем, Шупашкарти Венгри кухнин ресторанĕ валли вырăн пăхса çаврăннă.

**ЧР ПА пресс-служби.**

Ĕç çи – 2006

## Районти хуçалăхсенче çĕр улми кăларас ĕç мĕнле пынине кăтартни

**Ĕнерхи кун тĕлне çĕр улми кăларнă, процентпа**

| | |
|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 78 |
| ООО «Волга» | 100 |
| «Восток» | 100 |
| «Герой» | 100 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 100 |
| К. Иванов яч. хис. | 80 |
| Ильич яч. хис. | 93 |
| ЗАО «Колос» | |
| Ленин яч. хис. | 80 |
| ООО АФ «Лидер» | 69 |
| ООО «Нива» | |
| «Оринино» | 100 |
| «Передовик» | 54 |
| «Свобода» | 86 |
| «Сеятель» | |
| Суворов яч. хис. | 92 |
| ООО АФ "Рассвет" | |
| ОАО АФ "Нива" | |
| «Ударник» | 85 |
| «Хлебороб» | |
| Чапаев яч. хис. | 97 |
| «Чемеево» | 83 |
| Чкалов яч. хис. | |
| Районĕпе | 81 |

Саламлатпăр

## Уяв ячĕпе!

Чуманкассинчи вăтам шкулта вăй хуракансем!

Сире Учительсен кунĕ ячĕпе чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пĕлетпĕр, сирĕн ĕç сумлă та пархатарлă. Вĕренекенсене кунран-кун ăс-тăн тата воспитани пама сирĕн вăйсем çитсе пыччăр. Çемйĕрсенче яланах килĕшӳ, ĕçре çитĕнӳсем сунатпăр.

Пире тивĕçлĕ воспитани, кирлĕ канашсемпе вырăнлă сĕнӳсем парса пурнăç çулĕ çине тăма пулăшса пынăшăн эпир яланах сире хисеплетпĕр, юрататпăр, тав тăватпăр.

Пуриншĕн те пысăк тав сире.

**Чуманкасси шкулĕнче вĕренекенсем.**

## Юбилей ячĕпе

Хорнуй ялĕнче пурăнакан юратнă аннене тата хунямана, савнă асаннепе кукамая, ват асаннепе ват кукамая, ырă кăмăллă кинемее тата çывăх тăванăмăра **Зоя Якимовна ЕРЕМЕЕВАНА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, пире татах нумай çул савăнтарса пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Эсĕ пурăнса ирттернĕ пурнăç çулĕ пирĕншĕн тĕслĕх вырăнне.

**Салампа: хĕрĕпе виçĕ ывăлĕ, виçĕ кинĕ, 9 мăнукĕпе 8 прамăнукĕ.**



Юратнă мăшăра, хаклă аттене, хисеплĕ те ыр кăмăллă тăвана – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Юрий Михайлович ФИЛИППОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

40 çул ытла шофер пулса ĕçлеме сахал мар чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх кирлĕ. Çавăнпа та ĕçре ырă ят çĕнсе илтĕн. Çемьере те эсĕ пирĕншĕн пысăк тĕрек пулнишĕн эпир санпа мăнаçланатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Çирĕп сывлăхпа, тулли телейпе санăн пире нумай-нумай çул савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 5 мăнукĕ, тăванĕсем.**